Çĕр ĕçченĕн çулталăкĕ

# Сана çур аки шутлаттармасть-и?

**РАЙОНТИ ПĔРЛЕШӲЛЛĔ ХУÇАЛĂХСЕНЧЕ СУРТРИ ВĂРЛĂХĔСЕН ПАХАЛĂХĔ МĔНЛЕ ПУЛНИНЕ КĂТАРТНИ (ФЕВРАЛĔН 1-МĔШĔ ТĔЛНЕ)**

**Колонкăсенче: 1. Вăрлăх кирлĕ. 2. Тĕрĕслеттернĕ (центнерпа). 3. Кондицилле вăрлăх (процентпа). 4. Кондицие ларман вăрлăх пĕтĕмпе. 5. Вăл шутран тасалăхпа. 6. Çум курăк вăррисемли. 7. Шăтаслăхпа (центнерпа).**

| | | | | | | | |
|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Е. Андреев яч. хис. | 1800 | 1800 | 67 | 600 | 600 | 600 | – |
| «Волга» | 500 | 0 | 0 | 0 | 0 | 0 | 0 |
| «Восток» | 1400 | 1796 | 93 | 134 | 134 | 0 | 0 |
| «Герой» | 2070 | 2135 | 70 | 639 | 639 | 87 | 67 |
| Ильич яч. хис. | 3000 | 3560 | 8 | 3260 | 3260 | 3260 | 0 |
| ВТМ | 300 | 0 | 0 | 0 | 0 | 0 | 0 |
| Ленин яч. хис. | 850 | 820 | 24 | 620 | 620 | 620 | 0 |
| «Лидер» | 300 | 0 | 0 | 0 | 0 | 0 | 0 |
| «Оринино» | 2200 | 2200 | 84 | 362 | 362 | 0 | 0 |
| «Передовик» | 1830 | 1829 | 56 | 805 | 634 | 0 | 0 |
| «Свобода» | 3820 | 3820 | 88 | 460 | 460 | 460 | 0 |
| «Сеятель» | 940 | 940 | 88 | 110 | 110 | 110 | 0 |
| Суворов яч. хис. | 2380 | 2400 | 68 | 780 | 780 | 780 | 0 |
| «Рассвет» | 1150 | 1150 | 26 | 850 | 700 | 700 | 0 |
| «Ударник» | 3870 | 3870 | 46 | 2109 | 1653 | 1349 | 816 |
| «Хлебороб» | 340 | 344 | 13 | 299 | 299 | 299 | 0 |
| Чапаев яч. хис. | 1650 | 1650 | 18 | 1350 | 1350 | 1350 | 0 |
| «Чемеево» | 800 | 800 | 0 | 800 | 800 | 800 | 0 |
| Чкалов яч. хис. | 1600 | 1715 | 66 | 590 | 590 | 590 | 0 |
| Мичурин яч. хис. | 1200 | 1193 | 17 | 993 | 600 | 600 | 600 |
| КФХ Матвеев | 300 | 278 | 0 | 278 | 278 | 278 | 278 |
| КФХ Бархаткин | 920 | 920 | 0 | 920 | 920 | 920 | 0 |
| **РАЙОНĔПЕ** | **33220** | **33220** | **52** | **15959** | **14789** | **12803** | **1761** |

Çулла – çуна, хĕлле урапа хатĕрлеме хушнă ваттисем. Çак сăмахсенче ĕçсен вăрварлăхĕ, вĕсене вăхăтра пурнăçлани тата маларахах пысăк тухăç никĕсне хывса хăварни. Çулталăкăн пĕрремĕш уйăхĕ хыçа юлчĕ. Сисмĕпĕр те – çур аки ума тухĕ. Çав ответлă тапхăра эпир уйрăмах вăрлăх хатĕрлессипе паян епле хатĕрленетпĕр-ха? Хуравĕ çӳлерех илсе кăтартнă таблицăран аван курăнать. Вăрлăхăн пысăк пайĕ тасалăхпа ака кондицине ларманни хуçалăхсем гербицидсемпе япăх ĕçленине тата вырма вăхăтĕнче йĕтемсем çинчи ĕçе япăх йĕркеленине кăтартать. Паян вара хывса хăварнă вăрлăх çĕр ĕçченĕн чунне тивĕçтерейместь. Иртнĕ кĕркуннеренпе вăрлăх илессипе-çĕнетессипе никам та вырăнтан тапранман тесрен паха вăрлăх илессипе «Санары» агрофирмăпа тата Чăваш ял хуçалăх тĕпчев институтĕпе «Герой» («эстер» çурхи тулă 100 центнер), Чкалов яч. хис. («эстер» çурхи тулă 100 центнер тата «удача» çĕр улми 500 центнер), Суворов яч. хис. (суперэлитăллă «эстер» çурхи тулă 25 центнер, суперэлитăллă «эльф» урпа 25 центнер) илме килĕшӳсем турĕç.

Паян пĕрлешӳллĕ хуçалăхсен тĕп тĕллевĕ тырăна аласа ака кондицине çитересси, пысăк репродукцилле вăрлăха туянма мелсем тупасси. Ку ĕçе кая хăварас марччĕ.

Хуçалăхсенче кĕркунне управа хунă 3970 тонна çĕр улмин 42 проценчĕ (1660 тонна) элитăллă вăрлăх пулни, 1-4-мĕш репродукцилле вăрлăх 1161 тонна е 29 процент çеç пулни те лăпланмалли сăлтав мар. Пысăк пахалăхлă çĕр улми вăрлăхĕ паян «Ударник» хуçалăхра 1500 тонна, «Свобода» хуçалăхра «снегирь» сорт 80 тонна, «Герой» хуçалăхра «удача» сорт 80 тонна пулни пирки те манса каяс марччĕ.

**В. МОРОЗОВ,**
**«Россельхозцентр» филиалĕн Муркашри пай пуçлăхĕ.**

Район йĕркеленнĕренпе 65 çул çитнĕ май

# «Ĕçĕме вĕренӳрен мала хутăм»

Çатракасси ял тăрăхĕ 11 яла пĕрлештерсе тăрать. Вĕсенче 1032 кил-çуртра çынсем пурăнаççĕ. Нумай паллă çынсемпе пуян вăл. Мухтав орденĕн тулли кавалерĕ Александр Быков, Социализмла Ĕç Геройĕ Ольга Федорова, Раççей Федерацийĕн Геройĕ Николай Смирнов, Чăваш композиторĕ Аверий Токарев, Чăваш халăх артистки Дарья Столярова.



1929 çулхи чӳк уйăхĕн 7-мĕшĕнче çуралнă Валентина хăйне ашшĕ ачаранах ĕç кăна йывăрлăхсене çĕнме пулăшни пирки каланине ăса илсе ӳснĕ. Çатракассинчи 7 класлă шкултан вĕренсе тухсан вăл малашлăх ĕмĕтсемпе Муркашри вăтам шкула вĕренме кайнă. Анчах шкулти ачалăха вăрçă татнă. Апла пулин те хĕр вăтам шкул хыççăн Шупашкарти пединститута вĕренме кĕрет. Уйрăм çын хваттерĕнче укçа тӳлесе пурăнни, ирхи 4 сехетре çăкăр черетне чупни, ялтан хулана çурăм хыçĕнчи кутамккара амăшĕ пĕçерсе панă çăкăрпа çуран утни малашлăха пăхакан хĕрте яла çĕнĕлĕхсем илсе килес шухăша çирĕплетнĕ.

Пĕччен ĕçлекен (ашшĕ салтакран час таврăнман) амăшне хĕрхенсе Валентина пединститута пăрахса яла таврăнать те ял Советне ĕçе вырнаçать. Çулсем хăвăрт хыçа юлаççĕ. Анчах çав çулсенче ял Совечĕ вырăнти депутатсемпе пĕр чĕлхе тупса ял тăрăхĕшĕн ĕçлени асран тухмасть: ялсенче клубсем çĕкленеççĕ, медпунктсем уçăлаççĕ, ача сачĕсем ĕçлеме пуçлаççĕ, ялта пурăнакансем пĕрремĕш кирпĕч çуртсем лартаççĕ, çăмăл автомашинăсем туянаççĕ.

– Вĕсене пурне те пĕлетĕп, чылайăшĕнпе пĕр аларан тенĕ пек ĕçлеме тӳр килчĕ. Тăван çĕр-шывăн Аслă вăрçи хыççăн хамăр ялсене ура çине çĕклессипе, аталану çулĕ çине кăларассипе пирĕн вăхăтра пысăк ĕçсем туса ирттерме тиврĕ. Пирĕн ĕç сая каймарĕ. Ялсенчи тирпейлĕ асфальт çулсем, çĕнĕлле çурт-йĕрсем, халăх хушшинчи культура аталанни – йăлтах телейлĕ малашлăхăн пуçламăшĕсем, – терĕ Валентина Михайловна.

– Ялсен улшăнăвĕ куç умĕнче пулса иртрĕ. Паян пирĕн ял тăрăхĕнчи 7 çĕнĕ урама, вĕсенчи хитре те капăр кирпĕч çуртсене пăхма, ял çыннисем çут çанталăк газĕпе усă курнипе киленме кăмăллă, – калаçать хăйĕн мăшăрĕпе икĕ ывăлпа пĕр хĕр пăхса ӳстерсе пурнăç çулĕ çине кăларнă, ĕç пурнăçĕн ытларах пайне Çатракасси ял Советĕнче бухгалтерта ирттернĕ В. Иванова.

**Анатолий БЕЛОВ.**

**Сăн ӳкерчĕкре: ял Совечĕн 16-мĕш созывĕнчи депутатсем (1977 çулхи июнĕн 29-мĕшĕ).**

Пахчаçăсем валли

# 2009 çул валли пахча çимĕç акмалли-лартмалли уйăх календарĕ

| Культуры | Февраль | Март | Апрель | Май | Июнь | Июль | Август | Сентябрь | Октябрь | Ноябрь | Декабрь |
|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|---|
| Благоприятные дни для посева основных сельскохозяйственных культур | | | | | | | | | | | |
| Арбуз, дыня | 6-7, 26 | 6-7 | 2-3, 8-9 29-30 | 6-8, 26-27 | 2-6, 24, 29-30 | 1-3, 26-30 | 23-26 | 4, 20-23 | 19-20, 28-30 | 25-26 | |
| Баклажан, тыква, кабачок, патиссон | 6-7 | 6-7 | 3, 8-9 | 6-8 | 2-6, 30 | 1-3, 29-30 | | 4 | 1-3, 28-30 | 25-26 | |
| Бобы, овощные | 12-16 | 12-16 | 10-12, 15-17 | 9-10, 13-14 | 9-11, 14-15 | 8, 11-13 | 8-9, 12-13 | 5, 9-10 | 6-7, 10-11 | 3, 6-8 | |
| Горох, фасоль | 3 | | 8-9 | 6-8 | 2-6, 30 | 1-3 29-30 | | 4 | 1-3, 28-30 | 2, 25-26, 30 | |
| Земляника, ревень | 15-16 | 14-16 | 11-12 | 9-10 | 14-15 | 11-13 | 8-9 | 5 | 10-11 | 6-8 | |
| Капуста белокочанная и цветная | 2, 26 | 1-2, 29-30 | 2, 26, 29-30 | 26-27 | 24, 29 | 26-28 | 23-26 | 20-23 | 19-20 | | |
| Картофель | 12-16 | 12-18 | 10-17 | 9-14 | 8-11 | 8 | 12-13 | 9-10 | 6-7, 10-11 | 3, 6-8 | |
| Лук репчатый | 15-16 | 14-18 | 11-17 | 9-14 | 8-11 | 8 | | | | | |
| Морковь | 12-16 | 12-16 | 10-12 | 9-10 | 14-15 | 11-13 | 8-9, 12-13 | 5, 9-10 | 6-7, 10-11 | 3, 6-8 | |
| Огурец | 26 | | 2, 29-30 | 26-27 | 24 | | 25-26 | 21-23 | 19-20 | | 22-24 |
| Перец сладкий | 6-7 | 6-7 | 3 | 8 | 4-7 | 1-5, 29-31 | 1-2, 28-29 | 4 | 1-3, 28-30 | 25-26 | 31 |
| Перец горький | 1, 27-28 | | 23 | 19-20 | 16-18 | 14-15 | 10-11 | 6-7 | 3-5 | 1, 27-28 | 24-26 |
| Петрушка | 2, 26 | 1-2, 29-30 | 2, 26, 29-30 | 26-27 | 24, 29 | 26-28 | 23-26 | 20-23 | 19-20 | | 22-24 |
| Подсолнечник | 8-9, 26 | 8-9 | 4-5, 8-9 | 1-2, 6-8 28-30 | 2-6, 25-26, 29-30 | 1-3, 23, 26-30 | 23-26 | 4, 20-23 | 1-3, 19-20, 28-30 | 25-26 | |
| Томат | 6-7 | 6-7 | 3 | 8 | 4-7 | 1-5, 29-31 | 1-2, 28-29 | 4 | 1-3, 28-31 | 1, 25-29 | 25-26, 31 |
| Редька, репа, дайкон | 12-16 | 12-16 | 10-12 | 9-10 | | 14-15 | 10-13 | 6-10 | 4-7, 10-11 | 3, 6-8 | |
| Редис | 12-16 | 12-18 | 10-17 | 9-14 | 8-11, 14-15 | 8, 11-13 | 8-9, 12-13 | 5, 9-10 | 6-7 | 3 | |
| Салат, шпинат | 1-2, 26-28 | 1-2, 28-30 | 2, 26, 29-30 | 26-27 | 24, 29 | 26-28 | 23-26 | 20-23 | 19-20 | | 22-24 |
| Свекла | 12-16, 20-21 | 12-16, 19-21, 24-25 | 10-12, 15-17, 20-22 | 9-10, 13-14, 18-19, 22-23 | 9-11, 14-15, 19-20 | 8, 11-13, 16-17, 20, | 8-9, 12-14, 17-18 | 5, 9-10, 13-14 | 6-7, 10-11, | 3, 6-8, 15 | 4-5, 10-14 |
| Чеснок яровой и озимой | 15-16 | 14-18 | 11-14 | 8-12 | 4-8 | 1-5, 14-15, 29-30 | 10-11, 28-29 | 6-8 | 4-5, 31 | 1, 27-29 | 25-26 |
| Неблагоприятные дни посева основных сельскохозяйственных культур | | | | | | | | | | | |
| Вышеуказанные культуры | 22-25 | 22-23, 26-27 | 18-19, 24-25 | 15-17, 24-25 | 12-13, 22-23 | 9-10, 21-22 | 5-7, 20-21 | 1-3, 18-19 29-30 | 17-18, 26-27 | 16-17, 22-24 | 16-17, 20-21 |

**Хĕвел анăçĕнчи астрологи календарĕпе 2009 çулхи пуш уйăхĕн 21-мĕшĕнче, çĕрпе кун танлашнă вăхăтра, Марс çулне кĕретпĕр. Çуркунне типĕ те сивĕрех, анчах тырăпулă акма меллĕ пулĕç. Йывăç хунавĕсем ерипен аталанĕç. Марс çулталăкĕнчи çу кунĕсем ял хуçалăх культурисемшĕн меллех пулмĕç, ака вăхăтĕнче йĕперех те сивĕрех, кайран типĕ, пушар тухаслăхпа пысăк хăрушлăхлă. Кĕр кунĕсем, ахăртнех, сивĕ пулаççĕ. Юр тикĕс выртмасть, ăна тытассине йĕркелемелле пулать. Марс çулталăкĕ томат, сухан, пăрăç, пăрçа, редис, ыхра, мăн хăяр валли меллĕ килмелле.**

**Хĕвел тухăçри астрологи календарĕпе кăрлач уйăхĕн 26-мĕшĕнче çĕр ĕç Вăкăрĕн çулталăкĕ пуçланчĕ. Ку паллă ӳсен-тăран отраслĕшĕн те, вырăх-чĕрлĕхшĕн те ăнăçуллă шутланать.**

**«Сирĕн 6 сотка».**

Истори

# Çапла çĕкленчĕ çар комиссариачĕн çурчĕ

«Муркаш районĕ 65 çул тултарать пулсан, ун хыççăнах эпĕ 70 çул тултаратăп. Апла пулсан эпир районпа пĕр вăхăтрискерсем, пур йывăрлăха тӳссе ирттернĕскерсем», – ăшшăн кулса калаçать хăйĕн çулĕсене пытарма тăрăшса сывлăш çар десанчĕн подполковникĕ. Калаçать те пӳлĕмре йăрăс пӳллĕн каллĕ-маллĕ уткалать. Пăхма илемлĕ ун çине, пурнăç историйĕпе паллашмасăр 70 çул ниепле те параймăн ăна. Ку вăл иртнĕ кунсенче районти çар комиссариатĕнче хăнара пулнă, унăн пурнăçне ытти çар комиссарĕсенчен ытларах витĕм кӳнĕ Иван Антонович Кириллов.



– Вăрçă вăхăтĕнчи тата ун хыççăнхи йывăрлăхсем пире аталанса çĕр-шыва юрăхлă çын пулма чараймарĕç, – хăйĕн тăван килне таврăннă пек калаçрĕ Иван Антонович.

Пулас çар комиссариачĕн çурчĕ никĕсне 1981 çулхи хĕлле чавма пуçласан, 8-9 уйăхран çар комиссариачĕ çак çурта ĕçе кĕресси пирки кам шутланă-ха? «Ыттисене пĕлместĕп, анчах манăн тĕллевĕм юхăнакан çар комиссариачĕн çĕнĕ çуртне туса район чысне çĕклесси пĕрремĕш кунранах пулса. Тепĕр майлă каласан – тĕллеве туякан-пурнăçлакан салтакла», – калаçрĕ патварлăха çухатман подполковник-ветеран паянхи ĕçтешĕсем çине пăхса. Тăван çĕр-шыв сыхлавĕнче тăнă 29 çул та 7 уйăхран Иван Антонович икĕ тапхăрпа пурĕ 11 çул пирĕн районти çар комиссариатне ертсе пынă.

– Районти ĕç тăвакан комитетпа калаçу ирттерсе çар комиссариат çуртне официаллă майпах çĕклеме йышăну турăмăр. Подрядчик та тупăнчĕ. Вăл – Н. Гусак ертсе пыракан «Моргаушская» МСО. Çар комиссариачĕн никĕс котлованне 1981-1982 çулсенчи хĕлле чавма пуçларăмăр та 1982 çулхи кĕрхи призыва çĕнĕ çар комиссариатĕнчен çара ăсатрăмăр, – терĕ калаçăва аса илӳсемпе пуянлатса Иван Антонович Кириллов.

**А. ПЕТРОВ.**

**Сăн ӳкерчĕкре (сулахайран сылтăмалла): В. Андреев, И. Кириллов, А. Прокопьев çар комиссарĕсем.**